# ***Тилĕ тус***

***(Чăваш халăх юмахĕ тăрăх)***

***Вылякансем: Юмахçă***
***Тилĕ тус***
***Карчăк***
***Ват Мучи***

***<u>Юмахçă</u>*** Пĕр ват мучи вăрманта
Çӳренĕ чух сунарта
Тепле мăйпа чĕрĕлле
Ярса тытрĕ тет Тилле.

Миххе чиксе хучĕ тет,
Киле илсе килчĕ тет.

Салтрĕ тет вăл миххине
Кăларчĕ тет Тиллине.

***<u>Ват Мучи</u>***«Кил-ха,карчăк, кунтарах,
Пăх-ха, чунăм, лайăхрах,
Епле чаплă тир пулать,
Шăпах çĕлĕклĕх тухать!»

***<u>Юмахçă</u>*** Мучи çапла каласа
Хăйĕн кивĕ çĕлĕкне
Кăмакана пăрахса
Ярать вутра çунтарса.

***<u>Ват Мучи</u>*** «Ну , Тилĕ тус, виличчен,
Çак çĕççĕме хăйриччен,
Пар-ха пире юрласа,
Юрласа та ташласа»

***<u>Тилĕ</u>*** «Юрлăттăмччĕ юррăма,
Ташлăттăмччĕ тăшшăма –
Кĕпе çук-çке çийĕмре,-
Пиççи çук – çке пилĕкре,
Пушмакăм çук урара,
Таш тутри çук алăра.»

***<u>Юмахçă</u>*** Карчăк уçрĕ арчине,
Тупса пачĕ кирлине.

Мучи ларчĕ сак ҫине
Ярса тытрĕ кĕслине.

Саркаланса савăнса
Тилĕ ячĕ ташласа.

Алă ҫупать карчăкки,
Ура тапать старикки.

Сăвă – такмак каласа
Тилĕ ҫӳрет ташласа.

Тилĕ юрлать, хăй пĕрмай
Кантăк енне пăхкалать.

***Тилĕ*** «Ах, пăчă – ҫке, хăвăртрах
Кантăк ӳҫса ярăрах-
Кантăк уҫса ярăрах,
Алăкне те уҫăрах…»

***Юмахҫă*** Карчăк уҫрĕ кантăкне,
Мучи уҫрĕ алăкне.

Кула – кула, савăнса
Тилĕ ҫӳрет ташласа.

Акă сикрĕ – сикрĕ те,
Алăк патне ҫитрĕ те
Вĕлт! Ҫеҫ турĕ тулалла,
Вĕҫрĕ сĕм вăрманалла!

Икĕ вата шак хытса
Юлчĕҫ тет ҫăвар карса.